нинчен, тĕрлĕ ăмăртусене хастар хутшăннинчен пĕлетĕп çакна. Чăваш наци музейĕ /унăн директорĕпе çумĕ Э.К. Бахмисовпа В.Г. Шляхина тĕпчевçĕсем/, Чăваш наци вулавăшĕ /Р.М. Лизаковăпа Г.П. Соловьева ертÿçĕсем/, Вĕрентÿ шаралăхĕн "Эткер" центрĕ /таврапĕлÿ пайĕн ертÿçи Е.В. Андреева/ пысăк ĕç тăваççĕ. Вĕсем нихăш таврапĕлÿçе те ку таранччен "аюк" тесе каламан-ха. Эппин, мĕн чарса тăрать пире?

Пĕлтĕр Чăваш таврапĕлÿçисен пĕрлĕхĕнче Чăваш халăх академине уйăрса кăлартăмăр. Вăл халĕ чиперех йĕркеленсе çитрĕ, кирлĕ хучĕсене, ĕç планне туса пĕтерчĕ. Çавна май таврапĕлÿçĕсене çĕнĕ билетсем, çĕнĕ ĕнентерÿсем пама пуçларăмăр. Чи малтан Элĕксем, Патăрьелсем, Шупашкар районĕсем пĕтĕм таврапĕлÿçĕсен спискисене, хучĕсене тата çавăн пекех районти таврапĕлÿ ĕçĕн историйĕсемпе юлашки çулсенчи ĕç-хĕл шайлавĕсене /отчечĕсене/ тăратрĕç. Çак сăлтавпа вĕсем хăйсен пухăвĕсене ирттерчĕç, ĕç планĕсене çĕнетрĕç, лайăх ĕçлекенсене чысларĕç, ертÿçисене суйларĕç. Ку ĕçе пур районта та туса ирттермеллех. Шупашкартан пырса ирттерсе парасса ан кĕтĕр. Мĕнле кирлĕ, мĕнле йĕркелесен усăллă пулать, çавăн пек тума сĕнетпĕр.

Трак енчи /Красноармейскинчи/ тĕпчевçĕсем Неçтер Янкас ячĕллĕ литература, ÿнер, истори пĕрлĕхĕпе пĕрле хастар ĕçлеççĕ. Улатăрта вĕсем ÿнер музейĕнче /ертÿçисем А.К. Красновпа Н.П. Головченко/ чăмăртаннă. Хăш-пĕр çĕрте вĕсене район хаçачĕ чăмăртаса тăрать. Муркашсене район пуçĕ В.И. Вязов хăй ÿркенмесĕр хавхалантарса пырать. Сирĕн енче мĕнле тусан вырăнлине хăвăртан лайăхрах кам пĕлме пултарĕ?

Самарпа Чĕмпĕр облаçĕсенчи, Тутарстанпа Пушкăртстанри чăваш таврапĕлÿçисен пĕрлĕхĕсем /Чăваш таврапĕлÿçисен союзĕн уйрăмĕсем/ лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем иртнĕ çул шайлавне пирĕн пата çитерчĕç. Хастар пулнăшăн Н.Л. Осипова, Н.А. Казаков, В.А. Дедушкин, И.Г. Петров таврапĕлÿçĕсене чĕререн тав тăватăп. Мускав, Питĕр, Красноярск, Кемĕр, Томск хулисемпе çыхăну аван. Çав вăхăтрах Пенза облаçĕнчи Çăрттанлă районĕпе, Тĕмен облаçĕпе, Камчаткăпа, Якутипе, Омскпа çыхăнусем çухалчĕç. Ахăртнех, вĕсемпе ĕçе Чăваш наци конгресĕ урлă çĕнетмелле пулать. Кăçал юпа уйăхĕнче ЧНКан 5-мĕш Аслă Пухăвĕ пулса иртмелле. Унта таврапĕлÿ ĕçĕ çинчен çирĕп сăмах пулĕ. Эппин, кашни хутлăхри таврапĕлÿçĕсен çав пысăк пĕлтерĕшлĕ Пухăва халех хатĕрленме пуçламалла. Урăхла пулма та пултараймасть! Сăмах такам çинчен мар, хамăр чыспа ят çинчен пырать.

Пĕри тепринчен тăрса юлмалла маррине систерсе, кашни районтах вырăнти таврапĕлÿ /краеведени/ ушкăнĕсене туса çитермеллине, пур çĕрте те энциклопеди сăмахсарĕсене пухмаллине хытарсах палăртса хăварас тетĕп.

Виталий СТАНЬЯЛ,
Чăваш таврапĕлÿçисен союзĕн тĕпĕçтăвком председателĕ.

# ÇИТЕС ПЕРЕПИÇРЕ МИÇЕН ПУЛĂПĂР?

Пирĕн çĕршывра кăçал тумалли пысăк ĕçсенчен пĕри вăл – Раççейри пĕтĕм халăха шута илесси. Халăха шута илессине 1 Петĕр император вăхăтĕнче /1719 – 1721ç.ç./ тытăннă. Советсен вăхăтĕнче 1959 çултан тытăнса перепиçе вунă çулта пĕрре ирттернĕ. Черетлĕ перепиç иртнĕ çулта пулмаллачĕ,анчах та экономикăри йывăрлăхсене пула ăна 2002 çулта ирттерме палăртнă.

Тĕрлĕ инкексене, выçлăх тата вăрçă çулĕсене шутламасан, чăвашсен шучĕ пĕрмаях ÿссе пынă. 1989 çулхи перепиçре СССРта 1.842.346 чăваш пурăннине шута илнĕ, вăл шутран 1.773.645 чăваш Раççейре пурăннă. Чăваш Республикинче вара 906.992 чăваш шутланнă.

Пăхса тухар-ха чăвашсен йышĕ мĕнлерех ÿссе пынине. 1719–1723 çулсенче пĕтĕм халăха шута илнĕ тăрăх, чăвашсен йышĕ 217900 çын пулнă, çав шутра Чăваш Республикин территорийĕнче 194 пин чăваш пурăннă. Вырăссем вăл вăхăтра 11,1 миллион çын шутланнă, украинсем – 2 миллион, белоруссем – 382 пин, эстонсем - 309 пин çын пулнă. Хусан тутарĕсем вара чăвашсенчен те сахалтарах /175,5 пин/ пулни паллă.

| Çулсем | Чăвашсен шучĕ (пинпе) | | | |
|---|---|---|---|---|
| | Пурĕ | Çав шутра Чăваш Республикинче | Чăваш Республикин тулашĕнче (пин çын) | (процентпа) |
| 1723 | 217,9 | 194,0 | 23,9 | 11 |
| 1795 | 352,0 | 233,9 | 118,1 | 33,6 |
| 1897 | 843,8 | 542,4 | 301,4 | 35,7 |
| 1926 | 1117,4 | 667,7 | 449,7 | 40,2 |
| 1959 | 1471 | 770,4 | | |
| 1970 | 1694,4 | 856,2 | | |
| 1979 | 1751 | 887,7 | 863,7 | 49,3 |
| 1989 | 1842,3 | 906,9 | 925,4 | 50,7 |

Чăвашсен йышĕ мĕнле ÿссе пыни пĕрремĕш таблицăран лайăх курăнать. Иккĕмĕшĕнче Раççей регионĕсенче чăвашсен шучĕ мĕнле улшăнса пынине кăтартнă /пин çынпа/:

Çак таблицăран эпир Тутарстанпа Пушкăртстан, Кемĕр облаçĕпе Красноярск крайĕ-

нче чăвашсен шучĕ чакса пынине куратпăр.

Халь пăхар-ха мĕн чухлĕ чăваш ашшĕ-амăшĕн чĕлхине тăван чĕлхе тесе шутлать:

| Регионсем | Çулсем | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|
| | 1926 | 1959 | 1970 | 1979 | 1989 | Процентпа |
| Чăвашсен йышĕ/пурĕ/ | 217,9 | 1459,8 | 1694,4 | 1751,4 | 1842,3 | 100 |
| Чăваш республикинче | 667,7 | 770,4 | 856,2 | 887,7 | 906,9 | 49,2 |
| Тутарстанра | 127,3 | 143,6 | 153,5 | 147,1 | 134,2 | 7,2 |
| Пушкăртстанра | 84,9 | 110,0 | 126,6 | 122,3 | 118,5 | 6,4 |
| Самар облаçĕнче | 106,9 | 101,6 | 113,8 | 115,8 | 117,9 | 6,4 |
| Ульяновск облаçĕнче | 45,5 | 59,7 | 78,1 | 92,4 | 116,5 | 6,3 |
| Оренбург облаçĕнче | 0,3 | 21,3 | 24,6 | 22,8 | 21,5 | 1,2 |
| Саратов облаçĕнче | 17,2 | 8,9 | 15,4 | 17,5 | 20,6 | 1,1 |
| Кемĕр облаçĕнче | | | 31,3 | | 24,3 | |
| Темен облаçĕнче | | | 16,2 | | 31,2 | |
| Красноярск крайĕнче | | | 28,2 | | 26,8 | |

Çак таблицăран эпир чăвашсем майĕпен хăйсен тăван чĕлхинчен ютшăнса пынине асăрхатпăр. Чăвашсем Чăваш Республикинчен мĕн чухлĕ аякра пурăнаççĕ, çавăн чухлĕ хăвăртрах вырăсланаççĕ. Ку вăл нумай çĕрте чăваш шкулĕсем çуккинчен те килет.

Малалла чăвашсен йышĕ чакса пыни куç кĕрет.

Тăван Çĕршывăн Аслă вăрçинче Совет Союзĕнче 27 миллиона яхăн çын пĕтнĕ. Чăваш Республикинчен кăна 208229 çын çапăçу хирне тухса кайнă. Вĕсенчен 106470-шĕ каялла таврăнайман. Вăрçă хыççăн та йывăр сурансене пула нумай çын пурнăçран вăхăтсăр уйрăлнă. Апла пулин те çын шучĕ çултан çул ÿссе пынă, чакман.

Юлашки çулсенче пирĕн çĕршывра вилекенсен шучĕ çуралаканнисенчен ытларах пулни те пăшăрхантарать.

Илсе пăхар-ха чăвашсен йышĕ Чăваш Республикинче мĕнле хутшăнса пынине. 1970 çулта 22465 ача çуралнă пулсан, 10999 çын вилнĕ. Хутшăну – 11472 çын. Ку вăл пин çын пуçне 9,3 çын хутшăннине кăтартать. 1990 çулта вара 21116 ача çуралнă пулсан, 13545 çын вилнĕ. Хутшăну – 7571 çын. Пин çын пуçне – 5,6 çын хутшăннă. 1991 çулта 19113 ача çуралнă, 13459 çын вилнĕ. Хутшăну – 5654 çын. Пин çын пуçне 4,2 çын хутшăннă. 1992 çулта вара пин çын пуçне 2,7 çын çеç хутшăннă. Юлашки вăхăтра вилекенсен шучĕ çуралакансенчен ытларах. /Кунти кăтартусене "Население СССР", "Чувашская нация", "Многонациональный Татарстан" кĕнекесенчен, "Хыпар" хаçатран илнĕ/.

| Регионсенче (процентпа) | 1959 | 1970 | 1979 | 1989 |
|---|---|---|---|---|
| Раççейре | | 87,9 | 82,9 | 77,5 |
| хулара | | 69,1 | 65,9 | 64,2 |
| ялта | | 95,1 | 93,1 | 90,8 |
| Чăваш Республикинче | | 94,5 | 89,8 | 85,0 |
| çав шутра хулара | | 78,0 | 72,0 | 69,4 |
| ялта | | 99,3 | 98,4 | 98,5 |
| Атăлпа Урал тăрăхĕнче | | 91,4 | 86,8 | 81,6 |
| Тутарстанра | 95,4 | 95,1 | 92,6 | 87,9 |
| Самар облаçĕнче | | | | 72,4 |
| çав шутра хулара | | | | 50,7 |

"Хыпар" хаçатăн социаллă пурнăç пайĕн корреспонденчĕ Елена Атаманова акă мĕн çырать: "Кашни çул халăх йышĕ чакса пынине çирĕплетеççĕ демографсем. Уйрăмах çамрăксем, вăй питти çынсем пурнăçран вăхăтсăр уйрăлнине палăртаççĕ. Чăваш Енре те лару-тăру çапларах. 1999 çулта, сăмахран, пирĕн республикăра 13 пине яхăн çын çут тĕнчене килнĕ. Леш тĕнчене вара 16 пине яхăн çын ăсаннă".

Ульяновскра тухса тăракан "Канаш" хаçат Статистика комитечĕ пĕлтернине пичетленĕ. Акă мĕн тенĕ унта: "Патшалăх статистика комитечĕ пĕлтернĕ тăрăх, 2001 çул пуçламăшĕнче, пĕлтĕрхипе танлаштарсан, Раççейре халăх шучĕ 750 пин çынна яхăн чакнă /144,8/. 1992–2000 çулсенче пурĕ 6,6 миллион çын сахалланнă. Статистика кăтартăвĕсене тимлесен, 2015 çул тĕлне Раççейре 130 миллион çын çеç юлмалла. Аслă вăрçă пĕтнĕренпе те кун пекки пулман. Халăх вилессин шайĕ хальхи вăхăтра чи пысăкки шутланать. 2000 çулта вилекенсен шучĕ çуралакансенчен икĕ хут пысăкрах пулнă. Ку вăл, пĕтĕмĕшле кăтарту тăрăх, Европăра чи пысăкки. Юлашки вунă çул хушшинче 20–29 çултисем нумай вилеççĕ. Вĕсен кăтартăвĕ 60 процента яхăн ÿснĕ". /"Канаш" 30 /602/ №, 27.07.01/.

Тата тепĕр тĕслĕх: "Хыпар" кĕнекин 1999 çулхи 41/4/ номерне Комсомольски районне /ЧР/ халалланă. Унта 9-мĕш страницăра районта "Йыш чакса пыни" кăтартура (4-мĕш таблица) акă мĕн куратпăр.

А. Никитина "Хыпар" хаçатра çапларах çырать: "ЗАГС статистики – пурнăç тĕкĕрĕ.

Кăна ЧР Юстици министерствин ЗАГС пайĕн кăçалхи пĕрремĕш çур çулхи кăтартăвĕсене пĕлтĕрхипе танлаштарни те çирĕплетет.

Кăçал 6002 ача çуралнă /пĕлтĕр – 6370 ача/, 9319 çын вилнĕ, /пĕлтĕр – 9595/, /"Хыпар" 127/23283/ №, 14.07.01/.

Нумаях пулмасть Чаллăпуç районĕнчи /Самар облăçĕ/ Тилечер ял администрацийĕн пуçлăхĕ Г.Г. Моисеев ялта кăçалхи 6 уйăх хушшинче пурĕ те 3 ача кăна çурални çинчен пĕлтерчĕ. Вилекенсен шучĕ вун икĕ çынна çитнĕ. Шутласан, вилекенсен шучĕ çуралакансенчен 4 хут ытларах.

Чечен вăрçинче тата мĕн чухлĕ çын пуçне хунă. Вĕсенчен çĕре яхăн чăваш. Халĕ те вилеççĕ-ха.

Юлашки вăхăтра çĕнĕ çемье чăмăртанасси те çултан çул сахалланса пырать. Ялсенче хĕрĕхе çитнĕ хусахсене те курма пулать. Авланмаççĕ.

Ытларах мĕне пула вилеççĕ-ха? Сăлтавĕ нумай. Тĕрлĕ чир-чĕр, тĕслĕхрен, чĕрепе юн тымарĕсен, юн çаврăнăш органĕсен тата шыçă чирĕсем этем кунçулне кĕскетеççĕ. Инкек-синкек лексе сарăмсăр вилекенсем, хăйсем çине алă хуракансем те сахал мар. Теприсем виçесĕр эрех ĕçнипе çут тĕнчерен уйрăлаççĕ. Уйрăмах çамрăксем нумайăн вилеççĕ. Наркомансем те нумай пурнаймаççĕ. Мĕн чухлĕ наркоман хальхи вăхăтра хуласенче? Çап-çамрăк çынсем наркомание пула ытлашши доза йышăннипе мĕн чухлĕн вилеççĕ тата! СПИДпа рак чирĕсем те сарăлсах пыраççĕ. Вĕсене çаклатнисем хăтăлаймаççĕ вара.

Çын ĕмĕрĕ кĕскелни пурнăç условийĕсем йывăрланса пынинчен те нумай килет. "1999 çулта çĕршывăмăрта тĕрлĕ эрех-наркăмăш ĕçсе 23 пин ытла çын çут тĕнчепе сывпуллашнă. Статистика çирĕплетнĕ тăрăх, арçынсен вăтам ĕмĕрĕ – 58 çулпа, хĕрарăмсен 69 çулпа танлашать". /"Хыпар", 21 /23131/ №, 23.11.2000/.

| Йыш чакса пынă | 1959 çул | 1970 | 1979 | 1989 |
|---|---|---|---|---|
| Районта пурăнакансен йышĕ | 34990 | 36753 | 34997 | 28911 |
| Весенчен:чăвашсем | 26511 | 26925 | 25566 | 20993 |
| тутарсем | 5548 | 7396 | 7671 | 6662 |
| вырăссем | 2757 | 1985 | 1661 | 1191 |

Илсе пăхар-ха Самар облаçĕнчи патшалăх статистикин кăтартăвĕсене:

1991 çулта облаçра 39,9 пин çын çуралнă пулсан, 36,0 пин çын вилнĕ. Пурĕ 3,9 пин çын хутшăннă. Арçынсем вăтамран 64,6 çул пурăннă пулсан, хĕрарăмсем – 75,9 çул. 1999 çулта вара облаçра 24,6 пин çын çуралнă, 49,6 пин çын вилнĕ. Çапла вара вилнисен шучĕ çуралнисенчен икĕ хут ытларах. Вилнисен шучĕ 1995 çултанпа çуралнисенчен ытларах. Çапла вара 1999 çулта кăна облаçра çын шучĕ 25 пин чухлĕ чакнă. 1999 çулта арçынсен вăтам ĕмĕрĕ 61,2 çул пулнă пулсан, хĕрарăмсен – 73,7 çул.

| Ял хуçалăх продукцийĕ | 1991 çулта | 1999 çулта туса илнĕ |
|---|---|---|
| Тĕш тырă пухса кĕртнĕ | 3026 пин тонна | 1445 пин тонна |
| Пахча-çимĕç туса илнĕ | 173 пин тонна | 87 пин тонна |
| Аш-какай | 208,6 пин тонна | 88,8 пин тонна |
| Сĕт | 1010 пин тонна | 627 пин тонна |
| Çăмарта | 1040 миллион штук | 444 миллион |
| Măйракаллă шултра выльăх шучĕ | 1012 пин пуç | 458 пин пуç |

Облаçра ял хуçалăх продукцийĕ туса илесси те нумай чакнă (5-мĕш таблица).

Çӳлте асăннă кăтартусем, процент тăрăх шутласан, кашни регионта чăвашсен шучĕ мĕн чухлĕ чакнине те шутласа кăларма пулать.

Совет саккунĕсем тăрăх, çуралнă ачасен ашшĕ те, амăшĕ те пĕр халăх çыннисем пулсан, ачана çав халăх шутне кĕртеççĕ. Ачан ашшĕ е амăшĕ çеç чăваш пулсан, мăшăрсенчен пĕри чăваш пулмасан, ачана хăш халăх шутне кĕртесси мăшăр килĕшĕвĕнчен килнĕ /вăл йĕрке халĕ те çаплах/. Хăш халăха йышăнасси ачи 18 çул тултарсан çеç тĕпленнĕ: ӳссе çитнĕ ача хăй ирĕкĕпе амăшĕн е ашшĕн халăхне суйласа илме пултарнă. Анчах та чăвашсен ачисемех вырăс шутне кĕни те пайтах.

Самар облаçĕнчи нумай чăваш ялĕсем куç умĕнчех вырăсланса пыраççĕ. Ку вăл ашшĕ-амăшĕсем хăйсен ачисене вырăсла кăна калаçтарнинчен те, шкулта тăван чĕлхене вĕрентменнинчен те нумай килет. Облаçра 87 чăваш ялĕнче шкул пур, анчах 37 шкулта кăна чăваш чĕлхине (иртнĕ вĕренӳ çулĕнче – 47 шкулта) вĕрентеççĕ. Унта та предмет шучĕпе 28 шкулта кăна тăван чĕлхе урокĕсем пур. Ыттисенче пĕрер сехет факультативсем çеç. Вĕсенче те ачасене чăваш чĕлхи çинчен вырăсла ăнлантараççĕ е чăвашсем çинчен калаçу кăна ирттереççĕ.

Çак юхăмпах пыратпăр пулсан, чăваш майĕпен пĕтĕмпех вырăсланса каймĕши? Миçен пулăпăр-ши эпир, чăвашсем, çитес перепиçре?

Виктор СИМАКОВ,
чăваш халăх ăсчахĕ.